122 (17)

# ПОУЧЕНІЕ

## НА ОСВЯЩЕНІЕ ВНОВЬ ПОСТРОЕННАГО ХРАМА

**Въ селѣ Кошелеяхъ, Цивильскаго уѣзда.**

**НА ЧУВАШСКОМЪ ЯЗЫКѢ.**

---

**ИЗДАНІЕ**

Православнаго Миссіонерскаго Общества.

**КАЗАНЬ.**
Типо-литографія Императорскаго Университета.
**1894.**

Отъ Совѣта Братства Св. Гурія печатать разрѣшается. Казань, августа 26 дня 1894 г.

Предсѣдатель Совѣта Братства Св. Гурія Анастасій, Епископъ Чебоксарскій.

ГУ "Государственная книжная палата Чувашии"
Минкультуры Чувашии
428020, г. Чебоксары, ул. Гладкова, 6

# ПОУЧЕНІЕ

**на освященіе вновь построеннаго Храма въ селѣ Кошелеяхъ, Цивильскаго уѣзда.**

Пурне те ҫёрё тӑвакап ҫӑн таса ырӑ Сывлӑш ырӑлӑхёпе ҫак ҫиркў пайан Священниксем кёл тунӑ тӑрӑх тасалҫё, халӑхпа пухӑнса кёл тумалли вырӑн пулҫё. Пайантан ку ҫиркўре Турӑ Хӑйён аслӑ ырӑлӑхёпе тӑрса ҫакӑнта кёл тӑвакансене Хӑйён тивлетне йаланах парса тӑрё.

Ей тӑванӑмсем, савӑнӑр! Кам шухӑшланӑҫё-ха пирёп кӑҫал ҫав тёрлё илемлё сёнё ҫиркў пулассине? Ҫак ҫиркўве епир хамӑр вӑйупа тӑвас пулсассӑн, темисе ҫулта та тума пултараймӑттӑмӑр, халё вара

епир пилӗк-ултӑ уйӑхрах ҫавтӗрлӗ аван, илемлӗ ҫӗнӗ ҫирку туса лартнине куратпӑр.

Аҫтан килҫӗ-ши ҫак аслӑ ырӑлӑх? Кирӗк мӗнле ырӑ ӗҫ тума та Турӑ пулӑшать. Пирӗн приходра ҫак икӗ ҫулта тата икӗ йалта ҫӗнӗ ҫирку турӗҫ, ҫав йалсем, ҫӗнӗ приходсем пулса, пиртен уйӑрлиӑран, пирен приход ҫурри те йулмарӗ. Турӑ, есир кивелнӗ ҫирку вырӑнне ҫӗнӗ ҫирку лартма хӑвӑр вӑйупа пултараймассине пӗлсе, сире хӗрхенсе, пӗр пуйан ҫын ӑшне ӑҫта та пулин ҫӗнӗ ҫирку ларӑтма шухӑш кӳртнӗ. Ҫав ҫын Москаври хуҫа Петръ Ильичъ Богдановъ йатлӑ.

Ырӑ ҫын Петръ Ильичъ ҫирку лартасшӗн укҫа панӑ пулсан та, кунтах лартмалла паман; вӑл ҫирку лартас укҫана хамӑрӑн Высокопреосвященнѣйшій Архіепископ Владиміръ ирӗкне панӑ, ӑна ҫиркуве ӑҫта лартас тенӗ, ҫавӑнта тума каланӑ. Высокопреосвященнѣйшій Архіепископ Владиміръ Туррӑн ирӗкӗпе, пирӗншӗн Хусанти О. Протоіерей Николай Максимовичъ тарашнӑ тӑрӑх, ҫав ырӑ ҫын панӑ укҫапа кунта, пирӗн кивелнӗ ҫирку вырӑнне, ҫӗнӗ ҫирку лартма хушнӑ.

Мухтав Турра ҫав тӗрлӗ пысӑк ырӑлӑха пире

кăтартнăшăн! Тавта пуç, тăванăмсем, ку ҫиркӳве хăй вăйăпе лартса паракан ырă çынна Петра Илёича. Турă ăна сăлтăр. Хăйён тёрлё ырăлăхне патăр.

Тавта пуç тата хамăрăн ырă çын Высокопреосвященнѣйшій Владиміра ҫиркӳве кунта лартма хушнăшăн; ырă çын панă укçапа ҫиркӳве кунта вăл ларттарман пулсассăн, ку çёнё ҫиркӳ пирте пулмёҫё, ăçта та пулсан урăх çёрте лартнă пулёҫё. Тавта пуç (та) Хусанти Протоіерей Николай Максимовича пирёншён тăрăшнăшăн. Турă пиллесе ăна Хăйён ырăлăхне патăр. Сире те тавта пуç çак приход çыннисем: есир çак ҫиркӳве тума укса паман пулсан та йăвăç-ҫул туртарса нумай ёçлерёр; есир хăвăр ёçленипе те пулăшнăшăн телейлё пултăр: есир хăвăр йатăрсене ёмёр çухалми турăр; сирён ӳтёр вилсен çёрсе пётё, сирён йатăрсене çак ҫиркӳре ёмёрех асăнёç, кёлле кёмессерен сирёншён Турра кёл тăвёç.

Ей тăванăмсем савăнăр, хёпёртёр, Турра мухтаса тав тăвăр! Есир çакăнҫул аслă ырăлăхшăн Турра тав тăвас тетёр пулсан çакăнтан вара ҫăн малтан праздник кунёсенҫе çак ҫиркӳве кёлле килме тăрăшăр. Пайан çăк ҫиркӳве святит тунă кун ҫиркӳве çуремелли çинҫен каласа кăтартам тата сире.

Ђиркӳве халăхпа пухăнса кĕл тумалли вырăн теççĕ, тата ђиркӳве Туррăн çурђĕ те теççĕ. Турă Ывăлĕ Іисус Христос ун çинђен Хăйех каланă: „Манăн çуртăм кĕлĕ çурђĕ“ тенĕ. (Матѳ. 21, 13). Турра кĕл тума пур çĕрте те йурат, кирĕк ăçта кĕл тупи те ăна кăмăллă, çапах та ђиркӳре кĕл туни ытти çĕрте кĕл тунинђен Турра нумай кăмăллă.

Святой Іоанн Аттемĕр каланă: ђиркӳре, ей Турă çырлах пĕр хут калани те, килте çĕр хут ей Турă çырлах калапанђен паха.

Тата ђиркӳве çуремеллиçинђен Турă кнекиçинђе акă мĕн çырнă: Пĕр сăваплă Іуліанія йатлă хĕр-арăм пулнă, вĕл пĕр вăхăтра хĕлле пит сивĕре тумтир çук пирки ђирĕкӳве çӳреме пăрахпă. Пĕр праздник кунĕ батюшка ирхи кĕлле кĕрес тесе ђиркӳве кĕнĕ, ђиркӳве кĕрсессĕн Турă Амăшĕ сăнĕнђен сас илтнĕ; вăл сасă ак мĕн каланă: „сăваплă (Іул) Юліяніянана кайса кала, мĕншĕн вăл ђиркӳве çуремест? Килте кĕл туни Турра камăллă пулсан та ђиркӳре кĕл туни пекех кăмăллă мар“, тенĕ. Батюшка çав сасса илтсен хăранипе çавăнђухнех Юліанія патне кайса Турă Амăшĕ мĕн каланине ăна каласа кăтартна. Çавăнтан кайран Юліанія пĕр

праздник кун та ҫиркӳве каймасăр йулман, тесе ҫырнă. Мĕншĕн ҫиркӳре кĕл туни килте кĕлтунинҫен Турра кăмăллă? Ҫиркӳре ҫынсем пĕрле пухăнса кĕл тунă ҫух Турă ҫынсем пĕр пĕрне йуратнине курат, ашшĕ аҫисем ҫине савăннă пек, Турă та Хăйне кĕл тума пухăннă ҫынсем ҫине пăхса савăнат. Вара, Хăйне ҫăн-ҫăн кăл тăвакан халăх хушшине, Хăй ырăлăхĕпе тăрса, пурнете ниллесе Хăйĕн ырăлăхне парат, халăхпа мен ыйтнине пурне те нарат. Іисус Христос каланă: ҫĕр ҫинҫе есир иккĕн—и, виҫҫĕн—и Манăн йатăмпа пухăнсан, Епĕ унта вĕсем варĕнҫе“, тенĕ. (Матѳ. 21, 13). Унтан тата Вăл каланă: „есир Ман Аттемрен мĕн те пулин Ман йатăмна ыйтсассăн, Епĕ парăп ăна“, тенĕ (Матѳ. 18, 19). Ҫиркӳре кĕл туни килте кĕл тунинҫен ак мĕншĕн тата Турра кăмăллă. Ҫиркӳре кĕл туни пек килте кĕл тумалла мар. Килте сана аҫасем те кансĕрлеҫҫĕ, ҫын та сан патна пырат, тата килти ĕҫсем те асрах тăраҫҫĕ. Ҫиркӳре вара сана никамта кансĕрлемест, ҫиркӳре тăракан ҫынсем нурте Турра кĕл тăваҫҫĕ; ҫиркӳре есĕ пĕр-пĕр ҫухне кĕл тăвасшăн мар пулсан та ҫынсем кĕл тунине курса, ху та кĕл тума пуҫлатăн; ҫиркӳре нĕр-нер ҫуне урăх шухăша кай-

сан та, вуланине йе йурланине илтсен, каллех ҫав шухӑша хӑварса Турӑ шухӑшне тытатӑн. Ҭиркӳре кӗл туни килте кӗл тунинҭен ак мӗншӗн тата усӑллӑ. Ҭиркӳре пирӗнпе пӗрле пирӗншӗн ытти ҫынсем те кӗл тӑваҫҫӗ, батюшка та кӗл тӑват̆; епир ҫылӑхлӑран Турӑ пирӗп кӗлле хапӑл илмесен те, епир мӗн ыйтнине парасшӑн мар пулсассӑн та ытти ҫынсемпе батюшка кӗлтунине хапӑл илсе епир ыйтнине парат̆ пире.

Унтан тата ҭиркӳре кӗл тӑвакансемшӗн Турӑ Амӑшӗпе пур Святойсем те Турра кӗл тӑваҫҫӗ; ҭиркӳре епир кӗл тунине Турӑ илтмесенте пирӗншӗн Турӑ Амӑшӗпе Святойсем кӗл тунине илтет; епир мӗн ыйтнине Турӑ вӗсем кӗл тунипе парат̆. Ҭиркӳре кӗл тӑвакансем тата ак мӗнле усӑ кураҫҫӗ: Ҭиркӳре Турра йурасшӑн йепле пурӑнма кирлине каласа вӗрентеҫҫӗ. Турра йурасшӑн йепле пурӑнма кирлине пӗлмесен Ӑна нийеплете йураймӑн. Турра йураймасан, Ҫӳлти Патшалӑха та кӗреймӗн, ӗмӗр асапланмашкӑн тамӑк вутне кӗрӗн.

Ей тӑванӑмсем! Праздник кунӗсенҭе йепле те пулсан ҭиркӳве килмесӗр ан йулӑр, ҫав тӗрлӗ усӑллӑ пире кӗлле ҭиркӳве килпи. Ҭиркӳре кӗлле кӗ-

рес ҫухне ҫан ҫапаҫҫӗ. Ҫан сасси Туррӑн сасси пулат̆. Турӑ ҫан сассипе Хӑйех пире кӗлле ҫӗпет; нӗр-нӗр ҫухне есир кӗлле килесшӗн мар пек пулсан та, йе йӑвӑрланнӑ пек, йе пушӑ мар пек пулсан та ҫавна пӑхса ҫиркӱве килмесӗр ан йулӑр, вӑл шуйтанран пулат̆. Шуйтан ҫиркӱве кайасран сире ҫарасшӑн ҫапла йӑвӑрлашнӑ пек, йе пушӑ мар пек кӑтартат̆ сире. Ҫиркӱве килме хӑвӑр аҫӑрсене те вӗрентӗр: етем пӗҫӗкренпе мене вӗренет, ҫавна вӑл ватӑлса вилеҫҫен те пӑрахмаст̆ ҫавӑнпа аҫасене ҫамрӑкранпах Турӑран хӑраса, Ӑна йаланах кӗл тума, Унӑн ирӗкӗпе пурӑнма вӗрентӗр.

Тата калатӑп сире Ей тӑванӑмсем, татах калатӑп сире: нире ҫав тӗрлӗ нысӑк ырӑлӑх тунӑ ҫыпсене Петръ Ильича ҫиркуве лартма укҫа панӑшӑн, хамӑрӑп ырӑ ҫыннӑмӑра Высокопреосвященнѣйшій Архіепископ Владиміра ҫак укҫапа ку ҫиркӱве лартарнӑшӑн тата О. Протоіерей Николай Максимовича пирӗншӗн нумай тӑрӑшпӑшӑн куллене ирхине ыйӑхран тӑрсан, каҫхипе ҫывӑрма выртнӑ ҫух сӑхсӑхма тарсан, вӗсене йат тӑрӑх асанса вӗсемшен Турра кӗл ҭавӑр вӗсем сывӑ ҫух, сывлахшӑн кӗл тӑвар, вилсессӗн те вӗсене ап манар;

вĕсем вилсессĕн Тура вĕсепĕн ђунĕсене канăçлăха кӳрттĕр, вĕсем ирĕклĕ, ирĕксĕр çылăха кĕнине пурне те каçартăр тесе кĕл тăвăр. Унтан тата вĕсенĕн йађĕсене хар-пĕр хăйĕн поминанiе тейекен кĕнекеçине çырса хурăр, праздниксенђе вара кăнтăрлахи кĕлле кĕнĕ ђух просфора илсе çав поминанiе кĕнекене çырнă çын йађĕсене асăнма пађăшкана парăр.

Çапла асăнни пит усăллă.

Аминь.